# Вăран, хура халăх!

Пурнăçра пулать тем те пĕр
Тĕлĕнсе пĕтерейми,
Çавăнпа та халь этем-тĕр
Пулчĕ нимĕн тĕлĕнми.

Сывлăшра çынсем вĕçеççĕ,
Шыв айне çӳреç вĕсем.
Чирсене те халь çĕнеççĕ
Пирĕн паттăр тухтăрсем.

Тĕлĕнсе те пĕтереймĕн,
Пĕтереймĕн ăмсанса.
Ерипен вара этемĕн
Çитерен вăйне туйса.

Этем вăйĕ вăл хăватлă,
Хура халăх пĕрлешсен,
Çапса сирпĕтĕ мăнаçлăн
Патшана керменĕнчен.

Хуçасем, улпут таврашĕ,
Сехĕрленĕр вăл вăйран.
Баррикадăсем ӳсеççĕ,
Хура халăх, тăр, вăран!

Патшан керменĕ юнпа тулĕ,
Ирĕклĕх, пар аллуна.
Юмахри пек пурнăç пулĕ,
Аркатар-ха тăшмана.

Юмахри телей çĕршывĕ
Тухса тăрĕ куç умне.
Юмаха чăн тăвассишĕн
Шеллер мар пурнăçсене.

Патшан пăнтăхнă, кивĕ çарĕ
Ним йĕркисĕр арканать.
Чĕтрĕр, пĕтрĕ сирĕн влаçăр,
Çĕнĕ пурнăç пуçланать.

*Турхан, Э. Вăран, хура халăх! : [сăвă] // Турхан, Э. Юлашки юррăм : çырнисен пуххи / Э. Турхан. – Шупашкар, 2010. – С. 13-14.*